2007 çул – Ача çулталăкĕ

# Ачасем валли – парк

"Яла кĕрсен мĕн сас лайăх?

Ача-пăча сасси лайăх", – тесе юрланă чăваш юрăçи Ираида Вдовина. Кăçалхи çул вара Москакасси ял тăрăхĕнче ача сасси нумайланса та нумайланса пырать. Ача çураласси нумайланса пынăçемĕн тепĕр ыйту тухса тăрать: нумай хваттерлĕ çуртсем патĕнче ача-пăча площадки çукки.

Çак ыйтăва татса парас тесе Москакасси ял тăрăхĕн 2-мĕш участок депутачĕ Р.Г. Федорова хытă тăрăшрĕ. Районти коммуналлă хуçалăх пуçлăхĕпе Н.В. Любимовпа пĕр чĕлхе тупса, площадка тума майсем тупрĕç. Материалсемпе Муркаш ялĕнчи предприниматель Н. Васильев тивĕçтерме пулчĕ. Вара пуçланса кайрĕ хĕрӳ ĕç. Ачи-пăчи те, ватти-вĕтти те юлмарĕç пархатарлă ĕçрен. Малтан карта тытса тухрĕç площадка йĕри-тавра. Унта çанă тавăрсах А. Казначеев, В. Гаврилов, В. Сибяков, П. Ложнов ĕçлерĕç. Е. Овчинникова, Д. Кириллова, А. Алексеева, Р. Яковлева, А. Гаврилова пĕчĕк чиперуксем хăмапа, пăтапа тивĕçтерсе тăчĕç. Лармалли саксемпе пĕчĕк сцена тума С. Федоров, Г. Поркин, С. Матюков ăстасем пулăшрĕç.

Чуччу тунă çĕрте А. Поркинпа Р. Мясников тар кăларса ĕçлерĕç. М. Овчинников ĕçленине курсан чун савăнать – епле хитре пулатьçке хăйăрпа вылямалли беседка. В. Трихалкин дизайнер тунă вылямалли пĕчĕк пӳртсене савăнмасăр та тĕлĕнмесĕр пăхаймастăн.

Çапла пурте тăрăшса ĕçлесен кăна пысăк ĕç тума пулать. Хамăр тунă япала хаклăрах та, лайăхрах та. Ача çулталăкĕ ячĕпе тунă паркра ялан хаваслă кулă, юрă-ташă, савăнăçлă ача сасси илтĕнсе тăтăр.



**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакасси ялĕнчи библиотека библиотекарĕ.**

Спартакиада

# Çамрăклăх! Туслăх! Çĕнтерӳ!

«Малалла, Муркаш! Етĕрнесене маххă парар мар!» Çак девизпа хутшăнчĕç пирĕн районти ĕçлекен çамрăксем Етĕрнере сентябрĕн 12-мĕшĕнче района йĕркеленĕренпе 80 çул çитнине халалласа ирттернĕ спартакиадăна. Пирĕн команда шутĕнче спортпа туслă çамрăксем район администрацийĕнчен, районти тĕп больницăран, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнчен, Муркашри кирпĕч заводĕнчен пулнă. «Никита» футбол команди те спартакиадăна кайма тивĕçнĕ. Унта вара чикĕллĕ яваплăхлă «Аршин» обществăран çамрăк специалистсем сахал мар.

Етĕрнепе Муркаш районĕсенчи çамрăксен туслă тĕл пулăвĕн программи интереслĕ те пуян пулнă. Вăл икĕ пайран тăнă. Спартакиада пирĕн командăна çĕнтерӳпе пĕрлех хавас кăмăл-туйăм та ытлă-çитлĕ парнеленĕ. Уйрăмах мини-футбол хĕрӳ иртнĕ. Апла пулин те пирĕн спортсменсем Етĕрнесенчен 4:3 шутпа выляса илме пултарнă. Унтан «Хаваслă стартсем» пулнă.

Тĕл пулăвăн иккĕмĕш пайĕ çавра сĕтел хушшинче Етĕрнери тĕп хула библиотекинче иртнĕ. Çамрăксене район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ А.А. Филимонов саламланă, асăнмалăх парнесем – Етĕрне районĕн кĕске энциклопедине панă, пухăннисене районта çамрăксемпе ĕçлесси епле пулса пынипе паллаштарнă. Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ Г.Г. Быкова вара тав сăмахĕ каланă май районти йăла-йĕркесем, уявсем пирки калакан кĕнекене панă, Етĕрне çамрăкĕсене кун пек тĕл пулăва Муркаша чĕннĕ.

Юлашкинчен пурте пĕрле сăн ӳкерĕннĕ.



**Э. ЕФРЕМОВА,**
**район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: район команди.**

Продукци туса илекенсене пулăшма

# Хула пасарĕсем сире кĕтеççĕ

Юлашки вăхăтра ял хуçалăх продукцине туса илекенсене ăна вырнаçтарма меллĕрех майсем туса парасси çине ытларах тимлĕх уйăрма тытăнчĕç. Çавна май çулленех хула пасарĕсенче ял çыннисем валли хăйсен хушма хуçалăхĕсенче туса илнĕ ял хуçалăх продукцине сутма вырăнсем уйăраççĕ.

Кăçал та сентябрĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 15-мĕшĕччен «Кĕркунне парни – 2007» уйăхлăх ирттерме палăртнă. Ăна ял хуçалăх продукцине туса илекенсене Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар пасарĕсенче юрăхлă хаксемпе посредниксемсĕрех вырнаçтарма-сутма майсем туса парас тĕллевпе йĕркелеççĕ. Тепĕр паха ен – суту-илӳ вырăнĕсемшĕн укçа тӳлемелле мар.

**Ял хуçалăх организацийĕсем валли Шупашкарта вырăнсем уйăраççĕ:**

**Калинин районĕнче:**

– Трактор тăвакансен проспекчĕ, 9-мĕш çурт патĕнче;
– Трактор тăвакансен проспекчĕ, 43-мĕш çурт патĕнче;
– Трактор тăвакансен проспекчĕ, 24-мĕшпе 30-мĕш çуртсем хушшинче;
– Трактор тăвакансен проспекчĕ, 71-мĕш çурт патĕнче;
– Ленинла комсомол урамĕ, 58а çурт патĕнче;
– И. Франко урамĕ, 14-мĕшпе 16-мĕш çуртсем хушшинче;
– Кадыков урамĕ, 11-мĕш çурт патĕнче;
– «Южный» суту-илӳ комплексĕ (Ашмарин урамĕ, 59) çывăхĕнчи территорире;
– «Шупашкарти Горкоопторг бази» ООО (Николаев урамĕ, 27);
– 18-мĕш номерлĕ троллейбусăн Айзман урамĕн вĕçĕнчи чарăнăвĕ патĕнче;
– П. Лумумба урамĕ, 10-мĕш çурт патĕнче.

**Ленин районĕнче:**

– Эгер бульварĕ, 3-мĕш çурт патĕнче;
– Эгер бульварĕ, 21-мĕш çурт патĕнче;
– Эгер бульварĕ, 47-мĕш çурт патĕнче;
– Мир проспекчĕ, 17-мĕш çурт патĕнче;
– Мир проспекчĕ, 23-мĕш çурт патĕнче;
– Хевеш урамĕ, 17-мĕш çурт патĕнче;
– Шкул проезчĕ, 4-мĕш çурт патĕнче;
– Б. Хмельницкий урамĕ, 59-мĕш çурт патĕнче;
– Ягоднăй тăкăрлăк, 2-мĕш çурт патĕнче;
– Хусанкай урамĕ, 2-мĕш çурт патĕнче;
– Хусанкай урамĕ, 32-мĕш çурт патĕнче;
– 9-мĕш пилĕк çуллăх проспекчĕ, 16/15-мĕш çурт патĕнче;
– 9-мĕш пилĕк çуллăх проспекчĕ, 22-мĕш çурт патĕнче;
– 9-мĕш пилĕк çуллăх проспекчĕ, 5/12-мĕш çурт («Смак» магазин) патĕнче;
– «Колос» оптовăй апат-çимĕç продукчĕсен пасарĕнче (Николаев урамĕ, 14а);
– «Баррель» агрофирма» ООО (Базовăй проезд, 8) территорийĕнчи суту-илӳ площадкинче.

**Мускав районĕнче:**

– «Евроинтерьер» магазин (139-мĕш стрелковăй дивизи урамĕ, 22) районĕнчи площадкăра;
– Гузовской урамĕ, «Роща» чарăну районĕнче;
– Чăвашпотребсоюз çурчĕ (Московски проспект, 34) патĕнчи площадкăра;
– Çамрăклăх бульварĕ, 2-мĕш çурт патĕнче;
– «Северная» суту-илӳ компанийĕ» ООО территорийĕнче;
– «Салют» Культура керменĕ патĕнчи площадкăра;
– «Кăнтăр-Хĕвел анăç пасарĕ» ООО территорийĕнче;
– Миттов бульварĕ, 10-мĕшпе 12-мĕш çуртсем хушшинче;
– Уруков урамĕ, 7-мĕшпе 9-мĕш çуртсем хушшинче;
– Элкер урамĕ, 11-мĕш çурт патĕнче;
– обществăлла транспортăн «Чернышевски урамĕ» чарăнăвĕн районĕнче.

**Хресчен (фермер) хуçалăхĕ тытса пыракансемпе уйрăм çынсем валли Шупашкарта çакăнта вырăнсем уйăраççĕ:**

**Калинин районĕнче:**

– И. Франко урамĕ, 14-мĕшпе 16-мĕш çуртсем хушшинче;
– Трактор тăвакансен проспекчĕ, 71-мĕш çурт патĕнче;
– Ленинла комсомол урамĕ, 58а çурт патĕнче;
– «Южный» суту-илӳ комплексĕ (Ашмарин урамĕ, 59) çывăхĕнчи территорире.

**Ленин районĕнче:**

– Эгер бульварĕ, 47-мĕш çурт патĕнче;
– Мир проспекчĕ, 17-мĕш çурт патĕнче;
– Хусанкай урамĕ, 32-мĕш çурт патĕнче.

**Мускав районĕнче:**

– Эгер бульварĕ, 47-мĕш çурт патĕнче;
– обществăлла транспортăн «Чернышевски урамĕ» чарăнăвĕн районĕнче.

**Çĕнĕ Шупашкарта:**

– «Сокол» магазин территорийĕнче (Ж. Крутова урамĕ, 8);
– «Восход» магазин территорийĕнче (Терешкова урамĕ, 16);
– «Волжский» суту-илӳ çурчĕн территорийĕнче (Ельниковски проспект, 4а);
– «Ельниково» суту-илӳ çурчĕн территорийĕнче (Винокуров урамĕ, 40).

Çавна каласа хăвармалла. Суту-илӳ вырăнĕсене ял хуçалăх продукцийĕ туса илекен организацисене, хресчен-фермер хуçалăхĕсем тытса пыракансене, хушма хуçалăхра ял хуçалăх продукцийĕ çитĕнтерекенсене уйăрса параççĕ. Вырăншăн укçа тӳлемелле мар. Продукцие палаткăсенче, автомашинăсем çинчен касса аппарачĕсемсĕрех сутма юрать.

Çирĕплетнĕ вырăнсенче сутă тăвакансен çак йĕркесене пăхăнмалла:

– продукцие ăçта тата кам туса хатĕрленине кăтартса çырнине çакмалла;
– юридици вăйĕнчи предприятисен пĕрлехи патшалăх реестрĕнчен çырса илнин копийĕ пулмалла;
– çын хресчен (фермер) хуçалăхне тытса пыни е хушма хуçалăх пуррине çирĕплетекен документ копийĕ кирлĕ;
– сутуçă кам пулнине çирĕплетекен документ пулмалла;
– юридици вăйĕнчи предприятисен – тавар туса хатĕрленин документĕсем;
– ял хуçалăх продукцийĕпе сутă тăвакансен суту-илӳ вырăнне тата çывăхри территорие санитари тĕлĕшĕнчен таса тытмалла;
– суту-илĕве вĕçленĕ хыççăн вырăна тасатса хăвармалла.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Аса илӳ

# Утмăл çул иртрĕ унтанпа

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).**

Шкул пĕтерсен пирĕн класра вĕреннисенчен ытларахăшĕ аслă пĕлӳ илсе ответлă вырăнсенче ĕçлесе пурăннă. Халĕ те тĕрлĕ çĕрте пурăнаççĕ. Çыхăну та çук.

1947 çулта Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем çаксем пулнă:

Тамара Алексеевна Авдеева – 1929 çулта çуралнă, Шаптак ялĕнчен, учительницăра ĕçленĕ, 4-5 çул каялла вилнĕ.

Олимпиада Ивановна Ораина – 1927 çулта çуралнă, Муркаш ялĕнчен, учительницăра тата ВЛКСМ райкомĕн секретарĕнче ĕçленĕ, вилнĕ.

Александра Анисимовна Сорокина – 1927 çулта çуралнă, Вăрманкас ялĕнчен, Оринин ял Советĕнче тата Муркашра ĕçленĕ, халĕ Вăрманкасра пурăнать.

Нина Матвеевна Авдеева – 1929 çулта Шаптак ялĕнче çуралнă, Етĕрне районĕнче теплицăра ĕçленĕ, паянхи куна пурăнмасть.

Борис Осипович Васильев – 1929 çулта Шурчара çуралнă, Çурçĕр флотĕнче пулнă, моряк, офицер, 1970-мĕш çулсенче шыва путса çухалнă.

Вера Павловна Волкова – 1927 çулта Тойкилтĕре çуралнă, Шупашкарта ĕçлесе пурăннă, 2003 çулта вилнĕ.

Николай Сильвестрович Горохин – 1930 çулта Кашмашра çуралнă, Шупашкарта пурăннă, ĕçленĕ, унтах вилнĕ.

Юлия Ивановна Грачева – 1929 çулта Шурчара çуралнă, учительница, Кашмаш шкулĕнче вĕрентнĕ, халĕ пенсире.

Зоя Владимировна Данилова – 1929 çулта Шурчара çуралнă, учительница, халĕ пенсире, Куйбышев хулинче пурăнать.

Виталий Алексеевич Ильин – 1928 çулта Шурчара çуралнă, учитель, Шетмĕпуç шкулĕн директорĕнче вăй хунă, 2007 çулта вилнĕ.

Юрий Кузьмич Константинов – 1928 çулта Муркашра çуралнă, шофер пулса ĕçленĕ, вилнĕ.

Аркадий Антипович Калинин (эпĕ) – 1929 çулта Мулкачкассинче çуралнă, хуçалăхра агрономра вăй хунă, халĕ пенсире.

Альберт Романович Львов – 1929 çулта Ятман ялĕнче çуралнă, учитель, патшалăх хăрушсăрлăх органĕнче, посольствăра, Лаос патшалăхĕнче посол çумĕ пулса ĕçленĕ, полковник, Вологда хулинче 1997 çулта вилнĕ.

Рюрик Романович Львов – 1930 çулта Ятман ялĕнче çуралнă, авиамеханик пулнă, капитан, 1970 çулта Муркаш районне таврăнсан хыпарсăр çухалнă.

Дмитрий Сильвестрович Горохин – Çатракасси ялĕнчен, таван «Свобода» хуçалăхра столяр пулса ĕçленĕ, вилнĕ.

Валериан Гаврилович Суриков – 1930 çулта Кашмаш ялĕнче çуралнă, ВЛКСМ Муркаш райкомĕнче, Чăваш Республикин милици органĕсенче ĕçленĕ, майор, вилнĕ.

Никодим Петрович Федотов – 1929 çулта Пиккикасси ялĕнче çуралнă, Калерире ĕçлесе пурăннă, унтах вилнĕ.

Николай Никифорович Антонов – 1929 çулта Карманкасси ялĕнче çуралнă, Шупашкарта заводра ĕçленĕ, Шупашкартах пурăнать.

Геннадий Яковлевич Герасимов – 1928 çулта Анаткас Апаш ялĕнче çуралнă, медицина ĕçченĕ, Хусанти фармакологи институтне вĕренсе пĕтернĕ, Мускавра ĕçлесе пурăннă, вилни 4-5 çул.

Аркадий Михайлович Михайлов – 1928 çулта Мулкачкассинче çуралнă, Совет Çарĕн летчикĕ, офицер, пенсионер, Украинăра пурăнать.

Владислав Петрович Терентьев – 1928 çулта Ятман ялĕнче çуралнă, учительсе ĕçленĕ, вилнĕ.

Роза Николаевна Провырова – 1930 çулта Етĕрне районĕнчи Чаканар ялĕнче çуралнă, медицина ĕçченĕ, врач, халĕ Хусанта пурăнать.

Галина Семеновна Белова – 1930 çулта Кашмаш ялĕнче çуралнă, культура ĕçченĕ, Кашмаш клубĕнче ĕçленĕ, вилнĕ.

Валериан Григорьевич Григорьев – 1928 çулта Шарпаш ялĕнче çуралнă, Çармăс Республикинче агрономра ĕçленĕ, Звенигово районĕнче пурăнать.

Зоя Афанасьевна Алексеева – 1930 çулта Муркашра çуралнă, «Сельхозтехникăра» бухгалтерта ĕçленĕ, вилнĕ.

Муркаш шкулне вĕренсе пĕтернĕренпе 60 çул иртрĕ пулин те, çак вăхăт хушшинче эпир пĕр хут та тĕл пулу ирттермен, пĕр-пĕрне паллайми те пулнă ĕнтĕ, пĕрпĕрин çинчен те нимĕн те пĕлмен. Çавна май вĕсем çинчен кăштах та пулин çырса кăтартас терĕм. Чылайăшĕ паян пирĕнпе çук. Çавăнпа та вĕсен ывăлĕсемпе хĕрĕсем çак йĕркесене вуласа тухсан вĕсене аса илсе асăнĕç терĕм.

Эпир, Муркаш шкулне Оринин тăрăхĕнчен çӳренисем, шкул пĕтерсен 1947 çулта кĕркунне Чăваш ял хуçалăх институтне агрономра вĕренме кĕтмĕр. Пĕрремĕш çул вĕреннĕ хыççăнах манăн юлташсем Аркадий Михайлов тата Никодим Федотов кунта вĕренме пăрахрĕç. Аркадий Михайлов Чкаловскри авиаци училищине вĕренме кайрĕ, вĕренсе тухса летчикра ĕмĕрлерĕ. Халĕ ĕнтĕ мăшăрĕпе Украинăра пурăнать, пенсионер. Никодим Федотов вара Карелие ĕçлеме тухса кайрĕ те унтах ĕçлесе пурăнчĕ. Унтах çĕре кĕчĕ.

1952 çулта эпĕ Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухрăм. Мана ĕçлеме хамăр тăрăха пĕрлешсе пысăкланнă «Красное Сормово» колхоз председателĕ А.М. Моисеев илсе кайрĕ. Çапла вара хуçалăхра агрономра 1999 çулччен – 70 çул тултариччен ĕçлерĕм.

**А. КАЛИНИН.**
Мулкачкасси ялĕ.